Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

18 (7762) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи мартăн (пуш) 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Пĕчĕк бизнес аталанăвĕ**

## Сĕнтĕрсем çĕннине алла илеççĕ




*Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансем сутă тăвакан «Потап» салон умĕнче пĕр йышра пулса Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне уявларĕç, ташă-юрăпа хĕл ăсатрĕç, суту-илӳпе ĕçлекен салонăн çулталăкне паллă турĕç. Новая урамри савăнăç инçете илтĕнчĕ çав кун. Уйрăмах салон йĕркелӳçисем хăйсен клиенчĕсем хушшинче ирттернĕ лотерея вылявĕ кăсăклă пулчĕ. Салон директорĕ Елизавета Ивановна Иванова кĕвĕ центрĕ выляттарнине уява пухăннисем тĕп савăнăç вырăнне йышăнчĕç. Ку парнене Кивĕ Шоккăн çынни Александр Алексеевич Пальков тивĕçрĕ.*

*– 1970 çулта туса пурăнма кĕнĕ пӳртĕн чӳречисене 20 çул каялла улăштартăмччĕ кăна – каллех «ватăлчĕç». Ку хутĕнче вара «Потап» салонпа çыхăнтăм. 6 чӳрече 18 пин тенкĕне ларчĕ. Шутласа пăхрăмăр та алăка та кунтах тутарас терĕмĕр, – каласа парать Апчар ĕне ферминче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă ветеран.*

***А. БЕЛОВ.***

*(«Потап» ĕçĕ-хĕлĕ пирки вырăсла материалпа хаçатăн 3-мĕш страницинче паллашма пултаратăр).*

**Район администрацийĕнче**

## Халь туса ирттермелли ĕçсене пăхса тухрĕç

Тунти кун район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Чи малтанах вăл çак кунсенче иртнĕ Чăваш Республикин Правительствин тата Чăваш Республикин Президенчĕ çумĕнчи муниципаллă районсен пуçлăхĕсен Канашĕн ларăвĕсем çинче чарăнчĕ. Юрий Александрович урамсене электрификацилес ыйту çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Çак ĕçсене туса ирттерме укçатенкĕ малтан уйăрма палăртнинчен чылай сахалрах пуласси çинчен каларĕ. Çавăнпа та «çывăрса юлас мар» тесен çакна валли кирлĕ пур документа мартăн 22-мĕшĕччен хатĕрлесе çитермеллине палăртрĕ.

Канашлура Роспотребнадзорăн пирĕн районти территори уйрăмĕн тĕп специалист-эксперчĕ Г.Г. Воробьева иртнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсемпе паллаштарчĕ. Районти санитари тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинче тĕплĕн чарăннă май районти тасатмалли сооруженисен ĕçĕ, шыв пахалăхĕ, ытти нумай ыйту мĕнле пурнăçа кĕни çинчен каласа пачĕ.

Кăçалхи 2 уйăх хыçра ĕнтĕ. Планеркăра экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова çак хушăра районти промышленность предприятийĕсем пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 36 процент чухлĕ ытларах продукци кăларса сутнине палăртрĕ. «Сеспель» акционерсен хупă обществи кăтартăва вара 3,5 хута яхăн ӳстернĕ. Çавăн пекех Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем, «Моргаушрайгаз» филиал ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

Ял хуçалăх продукцине вара иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 5 процента яхăн ытларах туса илнĕ. Сыснасен йышĕ 9 процент ытла ӳснĕ.

Районти ытти отрасльсем те иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен лайăхрах ĕçленĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин районта çур акине хатĕрленес ĕç епле пынипе паллаштарчĕ. Вăрлăха кондицие çитерес ĕç малалла пырать. Кĕçех механизаторсене валли вĕрентӳ курсĕсене йĕркелеме палăртнă. Ял хуçалăх предприятийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пыраççĕ. Иртнĕ шăмат кун вăл «Ударник» тата Ильич яч. хуçалăхра пулнă. Владимир Аркадьевич çавăн пекех майракаллă шултра вылькăхсен йышне ӳстерессипе тимлесех ĕçлемеллине палăртрĕ.

Планеркăра район пуçлăхĕ ейӳрен сыхланмалли ĕçсене вăйлатмалли пирки палăртсах каларĕ. Çак эрнере ку тĕлĕшпе ĕçлекен комисси хăрушă шутланса тăракан вырăнсене çитсе тĕрĕслет.

Канашлура çавăн пекех Пĕрлехи информаци кунне ирттересси, район администрацийĕн кунĕсем вырăнсенче мĕнле иртни çинчен те сăмах пулчĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Суйлав ыйтăвĕсемпе**

## Çĕнĕлĕхсем те çук мар

***Черетлĕ суйлавччен вăхăт нумаях юлмасть. Вăл 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче пулмалла. Асăннă суйлавра пирĕн камсене суйламалла пуласси, унăн йĕркисем пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне Лилия Юрьевна ТАРАСОВАНА каласа пама ыйтрăмăр.***

– Вырăнти самоуправлени органĕсен представителĕсене иртнĕ созывра 2005 çулхи октябрь уйăхĕнче суйланăччĕ. 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче вĕсен полномочи тапхăрĕ тухать. Апла пулсан Муркаш район пуçлăхне, 16 ял тăрăхĕн пуçлăхне, депутатсен районти Пухăвĕн 25 депутатне тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен 185 депутатне çĕнĕрен суйламалла пулать.

Район пуçлăхне суйлассипе хăш-пĕр улшăнусем пур. Муркаш район пуçлăхне депутатсен Муркаш район Пухăвĕ хăйĕн йышĕнчен суйлать. Район пуçлăхĕ хăйĕн полномочийĕсене яланлăх мар професси тытăмĕпе пурнăçлать. Тепĕр майлă каласан, обществăлла йĕркепе.

Муркаш район пуçлăхĕ хăйĕн полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн çак тивĕçсене пурнăçлать:

– ытти муниципаллă пĕрлешӳсен вырăнти самоуправлени органĕсем, патшалăх влаç органĕсем, граждансемпе организацисем тĕлĕшпе районшăн ответлă пулса тăрать, Муркаш районĕшĕн доверенноççăрах ĕçсем пурнăçлать;

– депутатсен районти Пухăвĕ йышăннă Уставпа палăртнă нормативпа право акчĕсене алă пусать тата халăха пĕлтерет;

– хăйĕн полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн йышăнусемпе хушусем кăларать;

– депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр ларăвне пухма ыйтма пултарать;

– районти вырăнти самоуправлени органĕсем вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене тата федераллă саккунсемпе, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккунĕсемпе вырăнти самоуправлени органĕсем çине хунă полномочисене татса панине тĕрĕслесе тăрать.

Район пуçлăхĕ район çыннисем тата депутатсен районти Пухăвĕ умĕнче ответлă пулса тăрать. Вăлах депутатсен районти Пухăвĕн ĕçне-хĕлне йĕркелесе ертсе пырать. Палăртрăмăр ĕнтĕ, ăна депутатсен йышĕнчен суйлаççĕ.

Район Уставĕн 29-мĕш статйинче Муркаш районĕн пуçлăхне суйлассин йĕрки пирки каланă. Унта палăртнă тăрăх, район пуçлăхне депутатсен районти Пухăвĕ хăйĕн йышĕнчен депутатсен районти Пухăвĕн полномочийĕ вĕçлениччченхи тапхăра валли суйлать. Район пуçлăхĕн кандидатури пирки сĕнӳсене депутатсем депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ (черетсĕр) ларăвĕнче тăратаççĕ. Район пуçлăхне депутатсем хăйсен ирĕкĕпе уççăн е вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. Ăна депутатсен районти Пухăвĕн регламентĕнче палăртса хураççĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсенчен ытларахăшĕ сасăланă кандидат район пуçлăхне суйланнă шутланать.

Район пуçлăхне суйланине депутатсен районти Пухăвĕ хăйĕн йышăнăвĕпе çирĕплетет. Ун пирки пĕлтернине район пуçлăхне суйланă кунран тытăнса 7 кунран кая юлмасăр вырăнти массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлесе кăларма тивĕç.

Район Уставĕпе килĕшӳллĕн Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ пулма конкурс итогĕсемпе депутатсен районти Пухăвĕн полномочийĕ тухиччченхи тапхăра çирĕплетнĕ çын тивĕçет. Район администрацийĕн пуçлăхĕ пулмалли çыннăн кандидатурине конкурс итогĕсемпе конкурс комиссийĕ тăратнă кандидатсенчен суйласа илеççĕ.

Район пуçлăхĕ район администрацийĕн пуçлăхĕпе контракт тăвать. Район администрацийĕн пуçлăхĕ валли контракт условийĕсене депутатсен районти Пухăвĕ çирĕплетет.

Район пуçлăхĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе калакан положенисем хальхи депутатсен районти Пухăвĕн полномочи срокĕ тухнăранпа вăя кĕреççĕ. Апла пулсан ку вăл 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче пулать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**çырса илнĕ.**

**Республикăра**

## Ĕçлĕ тĕл пулусем

Иртнĕ эрнере республикăра РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Г.А. Рапота пулчĕ. Вăл ЧР Президенчĕпе Н.В. Федоровпа регионти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явнă. Шупашкарти «Федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕнче» пулнă.

Унтан вĕсем ветерансене «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе – 65 çул» юбилей медалĕпе наградăланă.

Хыççăн округри регионсенчи мăсăльмансен тĕн управленийĕсен ертӳçисен тĕл пулăвне хутшăннă. Раççейри ислам пĕрлĕхĕ хальхи вăхăтра мĕнлерех лару-тăрура пулнине, мăсăльман организацийĕсем патшалăх влаçĕн органĕсемпе пĕрле кăмăл-сипет тата тĕн йăли-йĕркине сыхласа хăварас тĕлĕшпе епле ĕçленине, чикĕ леш енчи радикал-экстремизм юхăмĕн япăх витĕмĕпе кĕрешессине йĕркелес ыйтăва сӳтсе явнă.

## «Çепĕç пике»

Мартăн 12-мĕшĕнче Шупашкарта «Чăваш пики – 2010» республика конкурсĕ иртрĕ. Муркаш район ятне «Муркаш пики – 2010» конкурс çĕнтерӳçи Татьяна Андреева хӳтĕлерĕ.

Республикăн тĕрлĕ районсемпе хулисенчен пуçтарăннă 12 хĕр хушшинче ăмăртса Татьяна, конкурса хутшăнакансенчен чи кĕçĕнни, «Çепĕç пике» номинацире çĕнтерчĕ. Конкурсăн пур тапхăрĕнче те хăйне тивĕçлĕ тытса, хăйĕн пултарулăхне те, чăваш халăхĕн историйĕпе йăли-йĕркине лайăх пĕлнине те кăтартса пама пултарчĕ.

«Чăваш пики – 2010» ята вара Тăвай районĕнчи А. Королева тивĕçрĕ. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнчи журналистика факультетĕнче вĕренет.

Пирĕн пикене çак конкурса хутшăнма пулăшса пыракансем пулман мар. Хатĕрленӳ ĕçĕнче Татьянашăн район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕ, Москакасси шкул администрацийĕ нумай тăрăшрĕç. «Расна» эстрадăпа фольклор халăх ансамблĕ те «Çепĕç пике» ята çĕнсе илме сахал мар пулăшрĕ. «Чувашсетьгаз» пĕрлешĕвĕн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ, «Сундырь-Хлеб» пĕрлешӳ, «Сывлăх» ФСК тата Ольга Афанасьева уйрăм предприниматель («Ольга» парикмахерски) спонсорла пулăшу пачĕç. Апла пулсан «пĕрлĕхре – вăй» тесе калама та пулать.

**Е. ЧЕРНОВА,**
**район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен тĕп специалист-эксперчĕ.**

**Хресчен, çур аки шухăшлаттарать-и?**

## Вăрлăх çителĕксĕртерех

***Хресчен умĕнче – çур аки. Районти çĕр ĕçченĕ çак ответлă тапхăра епле хатĕрленет-ха? Ку ыйту çине хуçалăхсенче çур аки валли янтăланă вăрлăхăн пахалăхĕ еплерех пулни те хурав парать. Камшăн хĕл ыйхи паян та вĕçленмен-ха?***

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Кондициллĕ вăрлăх (процентпа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 100 | Суворов яч. хис. | 100 |
| «Волга» | 100 | «Ударник» | 89 |
| «Восток» | 88 | «Хлебороб» | 28 |
| «Герой» | 91 | Чапаев яч. хис. | 100 |
| Ильич яч. хис. | 100 | Чкалов яч. хис. | 56 |
| Ленин яч. хис. | 62 | Мичурин яч. хис. | 100 |
| «Моргаушская» | 100 | «Гея» | 100 |
| «Оринино» | 52 | «Агро-Союз» | 82 |
| «Передовик» | 86 | КФХ Горбунов В.В. | 100 |
| «Свобода» | 76 | **Районĕпе** | **85** |

**Саламлатпăр**



Пирĕн юратнă, хисеплĕ, хаклăран та хаклă, ăшă кăмăллă, тарават, ĕçчен те сăпайлă, таса чунлă чи çывăх çыннăмăр – Муркаш районĕнчи Турай ял тăрăхне кĕрекен Мăн Токшикра пурăнакан **Елена Самуиловна АФАНАСЬЕВА** пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче 50 çул тултарчĕ. Юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çемьере килĕшӳ, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, тулли телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, Турă сана инкек-синкекрен сыхлатăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кил-çурту тăванпĕтентен ан татăлтăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Сана саламласа: юратнă мăшăру, ывăлусемпе кинӳсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукусем.**

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи апрель уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Çавăнпа та почтальонсемпе паян-ыранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Яланах пĕрле пулар!**